Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

# КАПКĂН

13-мӗш № ИЙУЛШӖН. 1928-мӗшӗ.

— 4-мӗш ҫул тухаӑ. —

## ХӐРАВҪӐ.

Йалти тӗттӗм вӑйсем халӑх куҙттурланасран хӑрассӗ. (Хаҫатран).



— Мӗн сасъӗвӗсем илтӗнеҫҫӗ ара урамра?! Куҙттӳрӑ революутси пуҫланса каймани унта?

# Куђттурă револђутси çинђен пуçа килнĕ шухăшсем.

Октăпĕр револђутсине хамăра-хамăр шеллемесĕр фронтсенђе çапăçса иртертĕмĕр, халĕ ĕнтĕ куђттурлантăмăр та, куђттурă револђутсине ресођутсисемпех иртерсе йарăпăрха.

Çуллахи вăхăтра вуламалли çуртсенђе куђттурă револђутси ерешменсем тăваççĕ.

Пылђăклă сăмсисене шăлса типĕтмесĕрех, куђттурă револђутсийĕ çинђен токлат тăвакансем пур.

Куђттурă револђутси пире сыснасем ĕрђетме те хушаť, анђах пурне те мар.

Халĕ те ђернил нумай пĕтет, куђттурă револђутси тума мĕн ђухлĕ ђернил кирлĕ пулĕши?

10 çул хушшинђе 20 арăм туйаннисем куђттурă револђутсиђђен миçе арăма çитерĕçши?

Хăш-пĕр хĕр хăй кађђине ыталасан, кађђин ђĕри сикме пуçлаť, хăйĕн ађине ыталасан тата, ађин ђунĕ тухса кайаť.

Куђттурă револђутси тунă ђухне, ерех пĕтет, тесе ан калăр. Апла каласан куђттурă револђутсине йуратманнисем нумай пулĕç.

Куђттурă револђутси тума пуçлас умĕн, пирĕн саниттар комиççи ђленĕсене мĕлкепе çăвса тасатмалла. И.

## Ерех—куђттурă револђутси тăшманĕ.



— Тата тепĕр путылкка парха хăвăртрах! Куђттурă револђутси çинђен токлат тума каймалла!

## Хамелеон.

Тискер кайăксене каларĕ арăслан:  
— Пурнăпăр пурте килĕштерсе...  
Кайăк кайăка çимесен  
Пирĕн пурнăç та пулĕ аван.  
Вăйлисен вăйсăррисене тивес мар,  
Пĕрпĕринпе килĕштерсе пурнар.  
Арăслан вăйли-паллах:  
Унтан хăрамалла.  
Хађ кайăк-кĕшĕк хăрамасť арăслантан.  
Тивес марри çинђен хăй вĕт каларĕ-ха?  
Анђах каçалапа сарăлђĕ вăрманта:  
— Арăслан тытса çирĕ ашака.

* * *

Хăшĕсем те калаççĕ:  
— Хађ çĕнĕ пурнăç тăваççĕ...  
Ерех пирĕн вирлĕ тăшман.  
Хĕрарăмпа лайăх пулмасан—  
Куђттурлă револђутси ара ăçтан?..  
Анђах кайран,  
Килсене пырсан,  
Арăмĕсене тăпăлтараççĕ çӳçрен,  
Ђышкисемпе параççĕ ĕнсерен...  
Кир. Йеринке.

# Вуланă хыççăн хăй шухăшĕсене калани.

(10 çулхи аҫа шухăшĕсем).

1. „Мишша кайăксене темĕн ҫул курасшăн, анҫах пĕри те куҫа курăнмаççĕ“...

Мĕн тăваĭши кайăксене курса? Кайăксем мĕ-ĕн! „Хĕрлĕ Ҫăваш“ йероплана курасҫĕ!

2. „Михали майри, пўрте каç тĕттĕмĕ кĕрсенех, аҫисемпе апат çиме ларҫĕ: пăсланса тăракан çĕрулмипе тип çăкăр çийеççĕ“...

Вырсарникун пулнă ĕнтĕ ку ĕç. Шупашкарта пулнă, унта хула копператтивĕ вырсарникунсем аш (какай) сутмасĭ.

3. „Мана хама лайăх пултăр. Çынсем çине суратăп анҫах“...

Ах, ухмах! Хаçатсенҫе „урайне сурма йурамасĭ“ тенине илтнĕ те ĕнтĕ вăл—çынсем çине сурасшăн.

4. „Лашасем мулкаҫ пек тапранса кайаççĕ, хытăран хытă, ăмăртмалла вĕçме пуçлаççĕ... Кайăк пек вĕçеççĕ“.

Мĕн вăл лаша вĕçни! Пирĕн комсомол йаҫейккин çекреттарĕ вĕçет тĕк вĕçет! Ун пек вĕçекен тупас çук вара.

5. „Сирĕн йал çывăхĕнҫе мĕнле те пулсан хапрăк-савăт çуки?“.

Пурҫĕ те, халĕ милитсисем илсе карĕç.

6. „Ашшĕ Мишшана 50 пус укçа панă“...

Ашшĕ пулҫи вăл! 50 пус?! Халĕ тавар хакĕсем йўнеллес вырăнне хăпарса пынине пĕлмест пулмалла вăл, ухмах!

7. Шупашкар туйи, шурă туйа çул çўреме шанҫаклă“...

Çуран кайса, çул çинҫе нумайрах вăхăт иртерсе çўрес те, вара командировккă укçи нумайрах илетĕп, тенĕ ĕнтĕ вăл.

8. „Пулса çитнĕ ыраш пуҫахĕсем хуçăлса ўкес пек тăраççĕ; пĕрпĕрне перĕнсе шавлаççĕ. Хăçан пулаĭ вăл?“...

Паллах ĕнтĕ—тыр вырмалли машшин çук ҫухне,

9. „Йăванваскамасĭ. Ашшĕ хушсан та васкамасĭ“.

Васкамасĭ! Ашшĕне хывнă пуҫ те, ашшĕ унăн Шупашкарти Рапоҫисен Ампулатторине тунă çĕрте ĕçлет пуҫ те...

10. Пĕр çулталăк иртет, ик çулталăк иртет, виçĕмĕш çулталăк иртет, тăваттăмĕш...

„Çулталăк, çулталăк!“ Çулталăкпах аташаççĕ. Çулĕ пулсан... ускоколейккă текенни пулсан та йурĕҫĕ те...

11. Йакур Йăванĕ каçхине Шăмат пасарĕнҫен таврăнаĭ. Пасарта вăл икĕ лав çўçе хуппи сутса хăварнă.

Хамăр йал вăрманĕнҫен вăрланă ĕнтĕ ăна вăл!

ИĂВАН МУҪИ.

# Вак-тĕвексем.

## Кайа йулмасĭ.

—Ваçли сопранире—Варвари те сопранире, Ваçли вуламалли çуртра—Варвари те унта. Ваçли шкулта—вăл та унта...

— Магтур хĕр. Çавăн пек хĕрсем кирлĕ ĕнтĕ пире куҫттурă револуутси тума. Кайа йулса пымасĭ.

— Кайа йулмасĭ çав. Ваçли ăна: йул, тет, вăл йулмасĭ: аттесем килĕшеççĕ, сансăр пурăнаймастăп, тет.

## Епитеми.

— Ĕсĕ илтни, Шупашкарта айăх ҫирĕпе ҫирлеççĕ, тет.

— Унпа пуҫ, пирĕн шефсем килмеççĕ. Кир.

## Мăнтăр çын.

— Иоççиф Çемйонҫ, ытла та есĕ мăнтăрланнăçке? Ăçта ара ĕçлетĕн?

— Копператтивра...

Кир. Микиш.

## Арăм политкрамăтти.

— Атте, калаха, мĕн вăл самокриттĕк?

— Ыйт аннўнтен! Ан ҫăрмантар мана!

— Анне, кала, мĕн сăмах — самокриттĕк?

— Мĕн усал сăмахсем персе çўретĕн! Самокриттĕк вăл вырăнтан кăларса ывăтаканскер. Микиш.

# Петĕр патша вăхăтĕнҫе ҫавăрнма пуҫланă ункă халҫ те ҫавăрнаҫ.

## „Ҫу утравĕн“ пĕтме пĕлмен вĕҫсĕр ĕҫĕ.

Вăл ĕҫ вĕҫне шуйттан та тупайрас ҫук.
Халăх сăмаххи.

Кĕрен пурҫăн тутăр пек шурăмпуҫ ҫуллахи хĕвел сарăлса тухассине систерҫĕ.

Ана йăранҫи тăри, курман куҫĕсене ҫаркаласа, ирхи сулхăн сывлăшалла йарĕнҫĕ.

Шепеле старик ҫĕртме тума ана ҫине ҫитсе суха пуҫне ҫавăрса кўлнĕ ҫĕре, хĕвелтухăҫ хĕрелсе илҫĕ.

— Ап-пай, Виҫҫĕрпăхан*) ҫырлахтăрах! Кунашкал кайа йулакан марҫҫĕҫке. Те вупăр пуснипе ăйха ҫĕклеймерĕм, тесе йаҫĕ вăл.

Шепеле старик йалта йатлă ҫып, пуйан. Тимĕр пăрҫаран та хытă. Хуралтсем унăн йĕри-тавра. Выҫăх-ҫĕрлĕх карта тулли. Хуратур самăр лаши сухара выҫаҫ.

Суха ҫине хĕрарăмсем ирхи апатпа туха пуҫларĕҫ. Шепеле ывăлĕ те, пĕҫĕк Васук, ҫур ҫĕрес пилеш шыв пек уйранла пĕр калакла сăмарта йатса тухрĕ. Шепеле лашине тăратрĕ. Пуҫламан ҫăкăр сăмсине касса илсе, ана варне ҫĕркуҫланса ларҫĕ.

— Тырă ашшĕ, тырă амăш! Ана ҫине хулăн пар, пурана тулли пар! Хăмăлĕ хăмăш пек кашлатăр, тăрри пăрҫа пек тултăр. Ий-йа. Ырă килҫуртпа, аҫам-пăҫампа, выҫăх-ҫĕрлĕхĕмпе тĕрĕс тĕкел усра...

Ҫавнашкал ҫўклесе Шепеле ҫăкăр сăмсине суха касси айне хуҫĕ. Унтан ана йăран ҫине ларса йўҫĕ уйранпа апатланҫĕ. Ҫийелтен сăмартине пуҫласа пăхрĕ. Ҫуррине ҫирĕ, ҫуррине хăварҫĕ, кăнтăрла ҫиме ана йăранне лартрĕ.

Нумайах та вăхăт иртмерĕ, хĕртсе пăхакан хĕвел кăнтăралла ҫывхарҫĕ. Шепеле лашине тăварса курăк ҫине йаҫĕ.

Хăйаматран тухни тен, вăйлă ҫавра ҫил Шепеле патнелле йăсăрланса ахăрса пыраҫ. Шепеле, хăйĕн катăк пуртине илсе, ҫитмĕл те ҫиҫĕ тимĕр карталлă сăмахсем каласа, ҫавра ҫил ҫине йара паҫĕ. Ҫавра ҫил пĕтрĕ, анҫах Шепеле пуртти йăранти ҫур сăмарта ҫине пырса ўкрĕ. Ҫур сăмарта инкекĕ ҫакăнта пулҫĕ. Уйран ҫĕресси те тўнсе кайрĕ.

— Ах, шуйттан кĕвенти!..

Ҫавăнтах Шепеле умне ҫамрăк шуйттан тухса тăҫĕ.

— Ҫапла ҫав, хĕрхеннине хĕрлĕ йăтă... аха-ха-а!.. тесе ахăрса йаҫĕ шуйттан ҫури.

Тарăхнă Шепеле ҫулса тытрĕ шуйттана хўререн. Вăл хăйне хытă тенине тўсиҫҫен ҫиҫĕ ҫĕр мими виттĕр тухĕҫҫĕ.

— Аха-а, алла кĕтĕни, аҫа ҫапман пуҫна? Ҫĕрĕллех курҫă тăватăп. Кăтартăп сана хытă.

Шепеле пилеш хулăпа шуйттан ҫурине ирĕлтерме тытăнҫĕ. Аҫа кушак пекех ҫухăраҫ шуйттан. Иккĕш тĕпĕртетнипе уй варĕнҫе тусан мăкăрланаҫ.

— Тархастăн каҫар, ырă Шепеле! Есĕ хушшнине пурне те тăвăп, кирлĕ кунта кирлĕ пулăп.

Ҫемҫелҫĕ Шепеле кăмăлĕ.

— Апла пулсан каҫарăп, мана виҫĕ ĕҫ туса пар.

— Иураҫ, тăвăп пурне те.

— Итле: ман асаттен аслашшĕ ăрăвĕнҫе пăлхар йăхĕнҫен пулнă Сармантей. Унăн ҫăххи сарă ҫăмарта туна. Ҫав сарă ҫăмартаран тухнă ҫĕппи сутă ҫул**) тупса сăхнă тетҫĕҫ. Вăт ҫавна тупса кил.

Ҫавăнтах шуйттан ҫавра ҫил пулса вĕҫтерҫĕ.

Шепеле кўлĕм кўлсе сухана тытăнҫĕ. Виҫҫĕ ҫавăрăннă ҫĕре хайхи ҫавра ҫил кайалла ахăрса та ҫитрĕ.

— Акă, ме, тесе кăларса та хуҫĕ Шепеле умне.

Шепеле савăннипе хăй куҫĕпе курнине ĕненмесĕр тĕлĕнет. Ҫутă ҫул ҫут ҫăлтăр пек йалтăртатса ҫунаҫ.

— Вăт тата сана калам. Ĕлĕк, аллă ҫул иртнĕ ĕнтĕ, Шăрт варĕнҫи ки-

*) Таврари паллă хайар киремет.

**) Приллийант—хаклă ҫул.

# Утне пула туртине.

Куђттурлӑх ҫук пирки, йалсенђе выђӑкђӗрлӗхсене хӗнекенсем нумай. Ним айӑпсӑрах хӗпеҫҫӗ. (Акроном сӑмахӗ),



— Атте, ма ђипер ӗнене хӗнен?

— Ђипери вара вӑл сӗтне нумай параканскер. Ытлашши сӗтне аңђу пасара кайса сутаҫ̌. Укҫипе таса тумланаҫ̌. Вара урӑххине тупаҫ̌ те, манӑн арӑмсӑр шӑхӑрса йул!...

ремете ђуклеме кайсан, ассанне пуҫӗнђи хушпуран нухрат тенкӗ ҫухатса хӑварнӑ. Ҫавӑнтанпа укҫа-тенкӗ перекеђӗ те пӗтрӗ. Ҫавна тупса кил...

Ҫавра ҫилтен тусан ҫеҫ мӑкӑрланса йулђӗ.

— Мӗнле ӗҫ тума хушасши кӑна йулашкинђен? тесе шутлаҫ̌ Шепеле.

Хура алтан варпуҫҫӗн, пусупа персе ҫитрӗ ҫавра ҫил нухратпа.

— Маттур та есӗ, уђук, виҫҫӗмӗш ӗҫ тумалла сан каҫ̌ук.

Ҫӳсеђӗ шуйттан малтанах, пӑхкаларӗ вӑл йӗри тавра.

— Вӑт итле, тӑнла лайӑхрах. Ҫаран ҫук пирӗн тӑрӑхра. Ҫавӑнпа ӗлӗкех аттесем пуҫ тайса ыйтнӑ патшаран. Петӗр Великки вара вӗсене панӑ ҫаран Атӑл улӑхне, 80 теҫеттин. Вӑл ҫӗрпе йунашар Сӗнтӗр*) опђи халӑхӗн ҫаранӗ выртнӑ. Вӗсем апла катари халӑха павӑшӑн килӗшмен. Вара хӑйсен улпуђӗ урлӑ сутра ӗҫ пуҫарнӑ. Сут ҫавах пирӗн Ођӑкасси майлах туса панӑ. Ун хыҫҫӑн вӗсем Хусана, Мускава ҫитнӗ. Ӗҫ пирӗн майлах. Анђах сут таврашсем, икӗ йенђен те ҫу хыпасшӑн, йурийех йӗкӗлтесе ӗҫе каллех ҫӗнӗрен пуҫарттарнӑ. Татӑксӑр тавлашу ҫаплах тӑсӑлаҫ̌. Вӑт есӗ кайса ҫав ӗҫе тӗпӗ-йӗрӗпе татӑклӑ пӗтерсе кил. Вара сана епӗр...

Шуйттан ҫури, кунашкал йӑвӑр ӗҫ панине илтсен, вӑрӑмӑн сывласа шӗвӗр ђӗрнисемпе ӗнсе тирне хыҫса илђӗ. Унтан ҫавра ҫил пулђӗ те, ђикме хулинелле «Ҫу утти» ӗҫне шырама вӗҫтерђӗ.

Шепелен хуратур самӑр лаши кӗҫенсе йулђӗ.

* * *

Пӗр ӗмӗр ҫурӑ иртрӗ. Шепеле ӑратти тавнах вилсе пӗтнӗ. Шӑммисем те ҫӗрсе, кӗл пулса йӑвӑҫ-курӑка тухнӑ. Шепелен ӗлӗк ђӗрӗ ђун кӗрейми рашђинђе арҫури ахӑрма пӑрахни те алӑ ҫул ытла. Анђах Шепеле старик йанӑ шуйттан ҫаплах «Ҫу утти» ӗҫне татса тавӑрнаймаҫ̌. Сутлӑ тавлашу кашни ҫулах расхут кӑларттараҫ̌. Ҫулассине кашни ҫулах ођӑкассисемех ҫулаҫҫӗ.

---

*) Ҫав опђах ђӑвашсем „Пихтула“, „Ишлӗ“ теҫҫӗ.

— Нимĕҫ вăрҫи. Самана хуранĕ вĕреме пуҫларĕ.

Революци! Слопотă!..

Ҫитрĕҫ ордаккассисем «Ҫу утти» ҫине утă ҫулма. Сĕнтĕр оттине ҫывăхри йалсенчи хресченсем пуртăсемпе, тимĕр сенĕксемпе, ҫавасемпе хупласа илчĕҫ.

— Памастпăр хамăр ҫывăхри утта! Кайăр тухса кунтан! терĕҫ вĕсем.

Тухса тарчĕҫ вара утăран ордаккассисем аран-аран.

Сĕнтĕрсем ҫулчĕҫ. Анчах хĕлле утине сут ордаккассисене илсе парчĕ.

Тепĕр ҫулне Калайкассинчи Чупимăв ҫав «Ҫу уттинчен» 15 теҫеттин хăйех кастарса илчĕ. Комун тăватăп, тесе халăха улталарĕ. Пайан кун та Чупимăвсем пĕрлешсе ĕҫлемеҫҫĕ. Анчах ордаккассисем, ывăннипе, ним те шарламарĕҫ.

Тата тепĕр ҫулне ордаккассисем «Ҫу утти» ҫине утă ҫулма ҫитсен, Сĕнтĕр халăхĕ каллех ӳпре пек хупса пычĕ. Тата Хусантан пĕр рот салтаксем ҫитрĕҫ. Ордаккассисем ҫулса тийесе карĕҫ.

Ун хыҫҫăн каллех «Ҫу утти» пирки ҫĕр сутĕнче ĕҫ пуҫланса кайрĕ. Хĕтĕхлекенсем нумай. Иалти полномочăннăйсем те, ваккатсем те, сутра ĕҫлекенсем те, пурте, пурте... Ҫавăн пирки вĕҫĕмсĕр кассатси. Тепĕр хут кассатси. Тата тепĕр хут кассатси. Ку вăхăтра ҫатма ҫинче «ҫу» та шăранать, вăлашкари тăрпа виттĕр те пăт-пăт тумланать. «Ҫу утти» ĕҫĕ ҫаплах тăсăлать, арканать, ҫавăрнать.

Революци пулни 7 ҫул. «Ҫу утравĕ» ĕҫне хамăр автономлă облаҫри тĕп ҫĕр контроль комиҫҫи тĕрĕслесе пăхать. Ордаккассисенех тивĕҫлĕ. Вĕсен хăйсен ҫывăхĕнче ҫаран ҫук. Сĕнтĕрсем Мускава. Унтан ĕҫе тепĕр хут Иетĕрнере сӳтсе пăхаҫҫĕ. Тата тепĕр хут Ҫĕрпӳре пăхаҫҫĕ. Иулашкинчен ҫирĕплеНет Шупашкарта.

Ĕҫĕн тивĕҫлĕхĕ саккун тăрăхах. Ҫулаҫҫĕ ордаккассисем кашни ҫулах.

Лăпланчĕҫ Сĕнтĕрсем. Тăватă ҫул иртрĕ. Шарламаҫҫĕ.

Шепеле йанă шуйттан ордаккассине ĕҫ вĕҫне пырса кăтартма тухнăччĕ. Анчах ҫул ҫинчен Мăнсĕнтĕре пăрăнмалла пулчĕ.

* * *

Каллех „Ҫу утти" ĕҫĕ чĕрĕлнĕ. 1928-мĕш ҫулта ĕнтĕ сĕнтĕрсем мар, Кармаҫкассинчи икĕ ҫын пуҫланă.

— Хамăр ҫывăхра ҫĕр хамăрăн, теҫҫĕ вĕсем ҫыпсем хĕтĕхленипе.

Мăнсĕнтĕрти (Тутаркас р.) ҫĕр комиҫҫи ĕҫе тепĕр хут пăхма тытăнать. Ийунĕн 27-мĕшĕнче ҫĕр комиҫҫи „Ҫу утти" ҫине анса план тăрăх тĕрĕслесе пăхать. Темле майлă пăхсан та, ку ҫĕр авалтанпах ордаккассисене тивĕҫлĕ. Петĕр Великки вăхăтĕнче ҫырса хăварнă крамăттă*) та ҫавнашкалах калать. Ҫапла вара ҫĕр комиҫҫи „Ҫу утравĕ" ĕҫĕ малтанхи пекех йулмалла терĕ.

Халĕ Шепеле йанă шуйттан Шупашкар тăрăх ҫӳрет. Кармаҫкассисен кассатси хутне ҫулса илесшĕн.

Нумайах пулмасть енĕ вăл шуйттана Ҫĕрĕҫ Комиссариатĕнче тĕл пултăм. Иалт ватăлса, кăвакарса кайнă. Икĕ ĕмĕр ҫурă етем хушшинче пурăннă пирки, ăна шатах етем сăнĕ ҫапнă. Хӳри те палăрмасть, мăйракисем те те ҫукпа пĕрех. Чисти етем. Вырăсла та вĕреннĕ.

— Шепеле старикĕн ҫур ҫăмартине пула, «Ҫу утти» ĕҫĕн вĕҫне шыраса икĕ ĕмĕр ҫурă ыгла етем хушшинче асапланса пурăнтăм. Шепеле хушнине пурне те тупрăм, ҫĕр ҫинче тупманни ним те пулманччĕ. Ҫĕр сучĕ вĕҫне тупма пулмарĕ, ҫаплах вилмелле пулать пулĕ, терĕ вăл вăрăмăн хуйхăрса.

———

*) Ку крамăттă ҫинчен „ Канашăн" 160-мĕш №-нче вула.

У.—ТУРАТ.

———

# Чаплă лару.

Лару чаплă пулнă, ĕҫĕсем те пит чаплă. Сăпса ҫырать:

Толикасси йалĕнче (Шуп. рай,) «чаплă лару» пухса ҫак ыйтусене сӳтсе-йаврĕҫ: 1) йал пурлăхне сутса ĕҫесси, 2) ун ҫинчен мĕнле майласа, саккуна улталаса, токăвăр суйса ҫырасси, 3) ҫуттине мĕнле майпа пайласа йанклаттарасси. Вак-тĕвек ĕҫсене пăхнă чухне Канайĕв Константина (комсомолĕҫа) хупаха ерех патне чупма, тепĕр комсомолĕсне— Никифăрăва ĕҫсе ӳсĕрлсе пример кăтартма суйланă.

Чаплă лару тăвакансене хăйсене сӳтсе-йавас пулать. Сӳтĕлесси сӳтĕлсе кайнă та-ха вĕсем, йавассине йавмаллах пулать пӳлмалла.

# Хамӑр вĕреннĕ, ыттисем тарам.

Ҫутĕҫ Комиссариаҭĕ сӳрĕк ĕҫленипе пурне те вĕрентес ĕҫ нумай ҫĕрте пĕгсе ларҭĕ. (Халӑх Комиссарĕсен Канашĕ йышӑнниинҭен. „Канаш“ 127 №).



**Ҫутĕҫ Комиссарĕ:**—Кĕнҭелер ĕҫлет, ĕҫ пыраҭ...
Пурне те вĕрентес ĕҫ?.. Наплеваҭ.—

# Йумӑҫсем кирлех ҫав!

(Хресҭен каласа пани).

Есĕ—„йумӑҫсем кирлĕ мар“—тетĕн, Ну, йурĕ. Кирлĕ мар пултӑр.

Апла пулсан, акӑ, итле-ха пĕр йумах каласа парам. Пирĕн Наркомстрав тени шухӑша кайнӑ.

— „Вӑт етемсем ҭаххуткӑпа ҭирлеҫҫĕ. Ҭирлени те ҫитмест, тата: канса выртаҫҫĕ ĕсĕрсен-ĕсĕрсен. Мĕн тӑвас ку етемсемпе? Йумӑҫсем ку ҭире пулӑшас ҫук, ĕнтĕ. Тухтӑрсем ташӑ сахал. Ҭӑварлейри санатторийе йарас—унта та сывалаймаҫҫĕ. Шалт аптӑрал!“—Ҫапла шухӑша кайнӑ Наркомстрав. Пĕтĕм пуҫĕ ҫаварӑнса кайнӑ унӑн шухӑшласа. Ҭӑнах та, шухӑша каймаллах ҫав: санатторинҭе ҭаххуткӑллӑ ҫынсене темĕн те пĕр парса емелленĕ, ҫапах та лешсем хӑнк та сикмен. Вара, аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ҭӑмнӑ, тенешкел, Наркомстрав ҭаххутка сиплеме санатторийе клавни тухтӑр пулма намӑс ҭирсене сиплекен тухтӑра йанӑ. Вӑ-ӑт!...

Ҭаххутки ҫапла тунӑ хыҫҫӑн та ҭаранмасҭ тет пулсан та, акӑ мĕн хаклӑ: Наркомстрав ҭаххуткӑллӑ ҫынсене сиплеме намӑс ҭирсене сиплекене хушаҭ, а Наркомстрав, пирĕн хӑраххӑм, ухмах мар, вĕт,—соснаттĕлни,—а есĕ пире йумӑҫсенҭен пĕтерешшĕн.

Ман шутпа, йешĕлĕ намӑс ҭирсене сиплекен тухтӑр ҭаххуткӑна сиплеме пултараҭ пулсан, пирĕн йумӑҫсем темĕнле ҭирсене сиплеме те пултармалла. Ҫапла ҫав... ШУҪ Л.




## 6395-мĕш номĕрлă сђот.

— У-у-у! улат̆ темĕскер Шупашкарти хăш-хăш çуртсенђе çĕрле.

— Урнă йăтăсем улаççĕ.

— Иван Петровиђ майрине çыртнă, тет.

— Тарар!

— Ав, пĕр йăтă килет, ђĕлхине кăларнă.

— Пивнойа кĕрсе пытанас.

Пытанасси... Éçĕ çапла пулнă. Моçелпромăн калантски какао 250 крамĕ 1 тенкĕ те 62 пус тăрат̆. Ђăвашсойус çавна Шупашкарти коркопа 2 тенкĕ çинђен 6395-мĕш сђотпа парат̆. Коркоп çав 2 тенкĕ тăракан йапала çине 75 пус хушса лартат̆. Çапла какао хакĕ тресринђен 69 прођђăна йахăн хушăнса кайат̆. (Ђăвашпайторкра çав какао, 2 тенкĕ те 79 пус вырăнне, 1 тенкĕ те 95 пус тăрат̆.) Çав хаклă какаона илекен çынсем укçисем уланă йнтĕ çуртсенђи кĕтессенђе.

## Мĕн шăрши?

Хĕрлĕ-кайăк Çĕрпӳ райĕçтăвкомĕнђе ĕçлекен Оççипăва кунĕпе хула тăрăх шыраса çӳрени çинђен çырат̆. Сĕтелĕ патне пытăмăр, анђах ĕнертенпех унта пулман пирки, унта унăн шăрши те çук. Хваттерне, темиçе тĕрлĕ уђрештенисене кĕрсе шыраса çӳрерĕмĕр. Вара лаша карттăђкине тутармасăрах 12 çухрăм киле каймалла пулђĕ, тет.

Оççиппăв ларнă пукан çине улпут шăрши çапнă пулас. Шăршласа пăхăрха сăмса пур çынсем.

## Халăх çине!

— Шак-шак!—Халăх çине!

— Мĕн халăхĕ?

— Трушина шăхлиђ килнĕ, ăна курма.

Çапла хăваласа çӳренĕ Хурăн-Кăкшăмра (Вăрнар р.) йал исполниттĕлсем. Шăхлиђ курма пухăнмасан, премĕк çиме пухăнмалла, тесе хăвалаççĕ. 5-6 хăваласан та, кулса хăвалаççĕ тесе, 10 çынран ытла пухăнмаççĕ, тет Тилĕ тус.

Капкăн курма пухăнмалла, унта пирĕн йал исполниттĕлсем çинђен çырнă, тесе хăваларха пайан. Халăх пухăнассăн туйăнат̆ апла хăваласан.

## Çăмăллăх.

Витĕр-хăлха çырат̆:

Çĕнĕ-Апхӳрт (Патĕрйел р.) йалсовет çыруçи Кослов Никколай тырă хатĕрлес кампланире кулаксенђен ĕçкĕсем ĕçсе кăна çӳрерĕ. Хăшне: хам пата 10 пăт леç, вара сана ђкоттă парăп, тесе пăгратса çӳренĕ, тет.

Епĕр те сана, Кослов йулташ, ђкоттă парăпăр. Хăв йусанмасан, пĕре çаклатас вырăнне, икĕ хут çаклатăпăр «Капкăна».

## Çемçетмелли емел.

Çĕпĕрте çĕпреллĕ çынсем ђылай пулмалла.

Çӳлти-Ђепула районĕнђи Пĕрлешӳ йалĕнђе пĕрпĕрне пулăшакан комиттет претçетаттĕлне—Ваççили Клементйева «комиттет старăсти» теççĕ. Хăй вăл пуйан çын. Комиттетшăн мар, хăйĕншĕн çеç тăрăшат̆. Мĕн тумалла çав «комиттет старăстипе», тет йалçынни.

Старăстăпа мĕн тумалла тата, ниме те ђиурăхсăр вăл. Комиттет аллинђи анасене çемçетме йурăхлă пуђ-и анђах.

## Оттонпа Анттон.

Тахăшĕ пĕри анкеттă çине çапла çырнă, тет:

— Революцисиђђен хушаматăм «Похойавленскиђђĕ», халĕ „Похопорăв“, ђăн хушаматăм Иванов, тенĕ тет.

Тепте й. ак мĕн çырса пĕлтерет:

Тепте йалĕнҭе (Тутаркас рай.) Малинăв Платтон йатлă çын (партти кăнтитаҭĕ), хăй партти çулĕнҭе тăнă майĕпе, хаԓ çуралнă аҭине тĕне кĕртмесĕр „Оттон“ тесе йат панă. Кайран тата пупа çĕрле киле илсе пынă та вăрттăн, ҭукун куршак ăшне шыв тултарса, пупа кĕлĕсем калаттарса алă ывăççипе ҭукун куршакран пуç тăрăх шыв йартарса, „Оттонран“ Анттон туса хунă.

Вăрттăн аҭине тĕне кĕртнĕ, хăйне те вăрттăнах парттирен кăларса, пупсен парттине вăрттăнах кĕртсе йарас.

## Кĕреçе аври.

Темшĕн калавă çав ваттисем „пурнăç пуласси кĕреçе авринҭен килет“ тесе. Кĕреçе авринҭен мар, урăххинҭен килет.

Апаш йалсоветҭĕн (Шупашкар рай.) Саврашнăй йалĕнҭе авалхи çĕрме пуйан Илле Пракухĕ пит аван пурăнат. Самооплошени те хуман ун çине, налок çпискине те паллă тоххоҭĕсене кĕртмен. Кирпĕҭ савăҭĕ пур хăйĕн, çĕтĕк-тир пуçтарат тата вăл акĕнт шуҭĕпе. Никам та тивмест ăна, тет С—к.

Алла ал çăват, теççĕ. Хăш умываԓнĕкре çăваççĕши кăсем. Йĕплĕ çăмах хуранĕнҭе çăвтарас.

## Инкек çине инкек.

— Хурах! Кравул! Çăлăр!..

— Пантитсем тапăнни мĕн? Кам кăшкăрат? Ҭупăпăр çăлма!

— Хурах! Вилетĕп!..

— Çитук матки кăшкăрат.

Аслă-Мами йалĕнҭи (Канаш р.) Çитук матки сăмакун йухтарнă ҭухне вĕри сăмакун пăтти (хуран) çине кĕрсе ӳксе ҭутах пиçсе вилеймен. (Ерми).

Сăмакун хуранĕ ăшĕнҭен турҭăкапа хирсе кăлартăмăр, халĕ тата «Капкăнăн» йĕпле çăмах хуранне кĕрсе ӳкрĕ. Мĕн тăвас тетĕн есĕ хуран ăшне ӳкме йуратакан çынпа?

## Сутмалли йумахсем.

1. Хĕлле—çара уран, çулла — çăматпа. [Иалти копператтив].

2. Автан пуçĕ—хӳринҭе, ури выртат çырмара. [Иалти пушар хатĕрĕсем].

4. Пуçа кайсан мамăк тӳшек. [Шупашкар урамĕнҭи пылҭăк].

Кир. Иеринке пухнă.

# Ё Н Е.

Хэлĕ пурнăç урани хăвăрт шăват, тимлĕ. Вăл ҭупат те ĕнтĕ, ҭупмаллипех ҭупат. Мĕшĕлтисене тапат те ĕнтĕ Анҭах пайан кун та ун пеккисем хутшăнсах пыраççĕ.

(Ваçанкка - „Мĕшĕлти Çемли“).

Ĕне
Лӳпперрине
Пур çын та пĕлет.
Вилнĕ пек
Иеррипе—
Вăл утса çӳрет.
Ҭи лӳппер ĕне
Таврашне
Танаштарма тивĕç—
Хăшпĕр çынсемпе.

* * *

Кĕтӳкка йатлă ҭи лӳппер ĕне
Темле майпа лекнĕ кăнтселерине.
Темĕн ҭухлĕ ĕç унăн умĕнҭе
Сроҭнăйсем выртаççĕ кĕтӳ-кĕтӳпе!
— „Ну-у-у! пулаççĕ кам, киревсĕр ĕçсем,
Мура кайатри мĕн мана ĕрлесе?
Ҭистийех ĕне хăшпĕр етемсем.
Ĕнеллех шутлаççĕ ухмах пуçсемпе!..“
Шăрглансах карĕ хай ĕне,
Шалт урăхла çырҭĕ сроҭнăй ĕçсене.
Урлă та пирлĕ, текех çаварса...
Нимсĕрех иртерҭĕ сакăр сахата!
Сроҭнăй ĕçсене сурса, йатласа
Пеҭĕ те ҭикрĕ „архив“ ăшкапа.
— „Совет ĕç пирки ҭунтан хыпăнма
Иерçӳ суккă манăн, пĕлмеççĕ ăна!
„Атăл леш йенне!..“ тесеҭҭĕ Пеҭукка
Хĕртĕнме саватăп савнă тусăмпа!..
Хай ĕне вĕçрĕ ҭунтан хыпăнса
Улт çунат ытла хаԓ ĕнен,
Мĕшĕлти ĕнен, лĕпсĕркке Кĕтӳккан!

АТТАИ М.

## Паллă арентаттăр.

Канаш районĕнҭм çĕр комиççи майăн 14-мĕшĕнҭе йышăннă ресоԓутсире ак мĕн вулатпăр:

П. Аԓфонтсĕв в числе 6 едоков проживает в пределах Ибресинского района, **арендует** мельницу и **Кошелеевский совхос**... (Каçал совхосне тара илсе пурăнат).

Çĕрĕç Комиссариатне тара илесшĕн марши тата вăл Аԓфонтсĕв?

# Ылтăн витри.

Пĕр пус укçа çĕр ҫул айĕнҫе выртаҫ, тенĕ ваттисем те, тен тĕрĕсех мар пуҫ вăл. Укçана çул çинҫе те тупма пулаҫ. Сăмахран, пĕрпĕр хуçа, çула тухас умĕн кăсйине арăмне саплаттарма ĕлкереймен пулсан, унăн укçи тухса ӳкет те çул çине, есĕ ăна тупатăн. Тупатăн та пуйатăн. Çил арман лартма та йураҫ вара вăл укçапа.

Танила Мĕкĕти çавăнпа та укçатенке шеллемест. Пĕр пус укçана вара сурҫăк выраннe те хумасҫ. Ав, нумайах пулмасҫ, пасарта кăвас сутакан майрана тӳрех çапла каланă вăл:

— Пĕре ĕçнĕ ҫух, тенĕ, ним шеллемесĕрех ĕçесха. Парха мана пĕр пуслăх кăвас, тенĕ.

Укçа тупма пултарнăран çапла каланă вăл. Укçа ăçта выртнине пĕлет тен вăл.

Пĕре çав Мĕкĕте пуйасшăн 15 çухрăм йал тавра мул шыраса çӳренĕ те, анҫах вăл вăхăтра çул çине укçа пăрахса хăвараканнисем пулман та, тупайман вара. Тупайман пирки, Какаç йатлă йала, Ҫĕлĕм Раманĕ патне, çул май, кĕрсе тухнă.

Ҫĕлĕм Раманĕпе вăл пĕр май (çу çименни 3 уйăх иртнĕ пулин те) кусĕсене çуллантарса пуйасси çинҫен йумахласа ларнă. Ҫĕлĕм Раманĕ Мĕкĕтене каланă.

— Епĕ сана пуйтарăттăмҫĕ те, есĕ тоҫккă çынна каласран хăратăп, тенĕ.

— Тупата каламастăп, тенĕ Мĕкĕте сăхсăхса.

— Ну, йурĕ! Акă мĕн, Мĕкĕте: манăн пĕр витре ылтăн пур,—30 тенкĕ пар та, илсе кай. Хоҫ иккĕн пулса илĕр, хоҫ виççĕн вуншар тенкĕ тӳлесе илĕр. Хамăра илме йурамасҫ. Хамăн ывăл Илле кăларас тесе шутларĕ те, арăмĕ ӳксе те вилҫĕ. Çавăнпа хаҫ пуплеме те хăратăп. Ну, кӳршĕсене ан шарлах тархасшăн, тенĕ.

— Раман! Епĕ каласран ан хăра, тенĕ каллех Мĕкĕте. Çынна каламастăп тесе, турра та, хĕвеле те, тамăкпа çăва тĕпне те, тата ыттисене те асăнса пĕтернĕ хыççăн, Ҫĕлĕм Раманĕ ĕненнĕ вара Мĕкĕтене, шăматкун каçпалла, çынсем çывăрса пĕтсен, пыма хушнă ылтăн илме.

* * *

Ҫăваш çĕршывне сăнаса çӳрес тĕлĕшпе тухнă çынсем те мар, ни турра пуççапма кайакансеĸерсем мар, ни тавлашуллă çĕр пирки çĕр суҫĕсем тăрăх сулăнса çӳреме тухнăскерсем мар, Таниле Мĕкĕтипе Тимухха, тата Уçăп арăмĕ утаççĕ çул тăрăх ыраш уйĕпе. Кăсйисене кашни вуншар тенкĕ ҫикнĕ йĕппе çĕлесе. Çын тĕл пуласран упаран хăранă пекех хăраççĕ. Иăтă та вĕсене çынăн туйăнаҫ, хура тĕмеске те çынăнах курăнаҫ, çил вĕрсе ыраш уйне хумхатни те етемĕнех туйăнаҫ.

Танила Мĕкĕти, пĕҫҫен 30 тенкĕ укçа тупайман пирки, йулташĕсене йертнĕшĕн, тарăхса пыраҫ. Анҫах пĕре тунă йăнăша калла тавăрмалли çук ĕнтĕ. Кайаççĕ малалла.

Çурçĕр çитесси пĕр сехет умĕн пырса кĕреççĕ Какаçа, Ҫĕлĕм Раманĕ патне.

Ҫĕлĕм Раманĕ, ге ылтăнне шеллевĕ пирки, куҫанаҫ тата.

— Кĕçĕр ӳсĕр çынсем те пур, мĕнле парса йарамши сире, тет.

— Епĕр шăппăн ҫавăпăр. Уншăн ан хăра! Тытха 30 тенкĕ укçине. Пире ылтăн парса йар,—çуллăн калаҫ Мĕкĕте.

Раман укçине илет те, „ну, айтăр, айтăр ман хыçран“ тесе, анкартине илсе кайаҫ пĕр мăн хурăн кутне.

— Вот çак хурăн кутĕнҫе, тет Раман хуйхăрса.

Хуйхăрса пусне усса килне кайаҫ.

Танила Мĕкĕти, Тимухха, Уçăп арăмĕ хĕресĕсене хывса пăрахса, кĕреçесемпе ҫавма тытăнаççĕ хурăн кутне.

Ҫаваççĕ, ҫаваççĕ.Васкасах ҫаваççĕ. Вăхăҫе-вăхăҫĕпе хурăнĕ шавласа илет Мĕкĕтесене хăваласа йарас шухăшпа. Ылтăн тухасса сиссе, Мĕкĕте кусĕнҫен вут-хĕм тухаҫ, Тимухха йĕри-таврa пăхма хăраҫ шуйттансем курăнасран, Уçăп арăмĕ тирĕне-тирĕне кайаҫ урине кĕреçе тĕлне тăвайымасăр. Хăйсенҫен шăпăр-шăпăр тар йухнине те сисмеççĕ.

Ҫавсан-ҫавсан витре хăлăпĕ курăнҫĕ. Унтан витри те сиксе тухрĕ. Иавăр. Тытрĕç те ылтăн витрине, çавра çил пек вĕçтерҫĕç килелле.

Улгă ура леп-леп-леп туса кайни

ҫеҫ илтĕнет уйра, тата шăрăха тӳсеймен йăтăсем пек хашкани илтĕнет уйри шăрђаксене.

Ак ăҫта пытанса пурăннă ҫак виҫĕ ҫын телейĕ!

Тимуххапа Мĕкĕте кашни пĕрер ҫил арман лартаҫҫĕ—тăватшар ҫунатлине мар, ултшар ҫунатлине. Лашисем вĕсен „ҫил—ҫунатлă" лашасем. Ҫĕнĕ, ђăнкăр-ђăнкăр тимĕр витнĕ пӳртсем. Усăп арăмĕ ђи малтан ҫĕнĕ кăвас ђĕрес туйанаĭ, ҫĕнĕ пӳрт лартса ҫĕнĕ пӳрт виттине хăмаран тăваĭ, ытлашши йулнă укҫине ҫĕре ђавса хурса кирлĕ вăхăтра ҫеҫ кăларса пыраĭ. Пĕр сăмахпа каласан, ҫак виҫĕ ҫын пек телейлĕ ҫынсем тĕнђипе те гупас ҫук.

* * *

Мĕкĕтепе йулташĕсем Какаҫран ҫиђĕ ҫухрăма ҫиђĕ минутра ҫитрĕҫ пуђ тен. Иала ҫитсен, Усăп арăмĕ патне кĕреҫҫĕ виҫĕ тус. Ара, тупнă ылтăна валеҫмеллеҫке-ха!

— Мана нумайрах парăр, тет Мĕкĕте, еп сире йертсе кайаканни пултăм!

— Тăлăх арăма хĕсĕрлеме йурамасĭ. Пĕр пек валеҫетпĕр—ҫуйăхаĭ Усăп арăмĕ.

— Парам сана «ытларах»—хирĕҫет Тимухха.

Харкашса кайаҫҫĕ. Хытăран та хытă харкашма тытăнаҫҫĕ. Шăри-шари, най-най! Ох, тĕнђе пăсăлсах карĕ!

Тимухха вăйлăрахскер ылтăн тултарнă витрене ҫавăрса илет ик аллипе, Усăп арăмĕ витре хĕрринђен уртăнаĭ, Мĕкĕте Тимухха аллисем ҫине пусăнаĭ.

Туртаҫҫĕ, туртаҫҫĕ витрене. Шăлĕсене йĕрсе йарса, сĕлехисене йухтарсах туртаҫҫĕ тискерлĕн харкашса. Туртсан-туртсан ылтăн витри ђанк ӳкет урайне. Витре ăшĕнђе сарă, шĕвĕрех... тăм... ҫатма йĕкерђи пек урайне сапаланса кайаĭ. Пурте аллисене шарт ҫапаҫҫĕ.

Улт ҫунатлă ҫил армансем, ђăнкăр-ђăнкăр тимĕр витнĕ пӳртсем, Усăп арăмĕн ҫĕнĕ кăвас ђĕресĕ—пурте тĕмран тунăскерсем пулнă.

* * *

Ђăн пулнă йумах пĕтрĕ. Танила Мĕкĕтисем халĕ те пурнаҫҫĕ, тет, анђах вĕсем халĕ ăсланнă: хурăн айĕнђи мула шырас вырăнне, копперативтив претҫетаттĕлне кĕмелли майсем шыраҫҫĕ, тет. Ђĕлĕм Раманĕ те пурнаĭ, тет. Вăл каллех вĕсене пулăшма хатĕр, тет. Анђах мĕнле майпа пулăшассине тĕрĕссипе кăтартса пама пултараймастпăр. Килес суйлавра курăпăриха, тен.

ИАВАН МУЂИ.



**Хресђен:** Мĕн хак кирпĕђи? **Кирпĕђ ҫапакан:** Пинĕш 70 тенкĕ. **Хресђен:** Кăшт та ӳкерместĕни? **Кирпĕђ ҫапакан:** Ӳкерместĕп. Ӳкмест вăл, ăна ђул ҫурт тунă пек купаласа хунăҫке! **Хресђен.** Е-е! Еп йăнăш килнĕ ѳппин кунта. Кирпĕђ ҫапаканни пуђ терĕм те сана, укҫа ҫапаканни пулнă мĕн ѳс! И—ă.

# Кусатранăв историйĕ.

Шыва кĕрсе тухсан хĕвел ăшшинҫе ларма питте лайăх. Хăıĕ вара шыва кĕнĕ вăхăтра темиҫе хут хăйăр ҫине тухса выртаҫҫĕ. Ҫуллахи куна мĕнне калан, рехет вăл ҫуллахи вăхăт. Хĕлле тăман ҫăвать, куҫа кĕрет, сивĕ, калаҫас та килмест ҫынпала. Ҫапла пĕр шăрăх кун енĕ те шыва кĕме кайрăм. Унтан таврăннă ҫух Кусатранăва тĕл пултăм. Меллĕ вырăн тупнă та, шухăшласа ларать. Мана курсан пит хĕпĕртерĕ.

— Лар кунта, калаҫăпăр, тет хăй ҫумне кăтартса,—хĕвел ăшшинҫе ларни усăллă вăл, тухтăрсем хушаҫҫĕ, тет. Ҫитменнине тата укҫасăрах, никама та нимĕн тӳлемелле мар, тесе илĕртет.

— Ҫапла пулĕ те, вăхăтăм ҫук—, терĕм.—Айта манпа пĕрле, ҫул ҫинҫе каласа парăн. Ман ҫăнахах васкамаллаҫҫĕ. Тăҫĕ ку хайхи манăн.

Ăҫта мура васкаттăр вара есĕр?— ҫиленсе хускатса йаҫĕ вăл хытă сасăпа.—Васкаса ĕҫ пулмасть вăл. Вăхăҫĕвăхăҫĕпе шухăшлас та пулать. Пайан ман ман шухăшла-шухăшла тăн пĕтрĕ. Ăнланатни?

— Ну, ну кала, итлетĕп.

— Ĕҫĕрĕнтĕм вĕı!—терĕ вăл сасартăк.—Ыгкăнтăм.

— Мĕнтен ĕҫĕрĕнтĕн?

— Вырăнтан сирпĕтрĕҫ. Ăнланатни? —терĕ вăл тепĕр хут ман ҫине пăхса.

— Ăнланмалла калатăнҫке, ăнланатăп, терĕм епĕ ăна.

Вăл манран урăх сăмах кĕтнĕ пулас, салхуллаиҫĕ темĕскер. Ҫĕнмесĕр утса пыратпăр. Ăна вырăнтан кăларнине тепĕр хут шухăшласа пăхсан, епĕ тĕлĕнсе кайрăм: аҫи пит йавашскерҫĕ.

— Ҫу-у-у-к, епĕ ун ҫинҫен ма-а-а-р, сирпĕнни мĕскер вăл, ăна такам та пĕлет, мĕншĕн кăларнине пĕлĕсĕн есĕ!

— Шуйттан пĕлети мĕншĕн сирпĕтнине! Ăна пĕлейместĕп вара, терĕм ăна хирĕҫ.

— Тоттă, ҫавă ҫав!

— Мĕн «тогти». Еп, ҫветтуй сывлăш мар вĕт пурне те пĕлсе тăма.

Итле, инттереснă пит, шухăшласан пуҫу ҫаврăнĕ.

— Ну, итлетĕп, кала, йара пар.

Ҫак сăмахсем хыҫҫăн епĕ хам та, йулташпа хаҫ шут тума йураманнине, майлăрах калаҫмаллине сисрĕм. Ĕлĕк вăл шут тума йуратаҫҫĕ те, хаҫ хуйхă унăн.

— Ĕсĕ пĕлегĕн, ĕп вĕг сăмаха тӳррипе калап, пуҫласа йаҫĕ Кусатрачăв ҫамки ҫинҫи йĕпе сӳҫ панăркине пĕтĕркелесе. «Самокриттĕкшĕн кăларнă иккен» шухăшлатăп ăшăмра. Тем каласан та ҫав йĕркепе.

— Пуҫлăхна криттĕклерĕн пуҫ?— пӳлсе ыйтрăм унтан.

— Итле, епĕ сана йĕркипе каласа парăп. Криттĕккă-и вăл, темĕскери пĕлместĕп, ĕҫ акă мĕнле пулҫĕ. Претҫетаттĕл патне хурăнташĕ килнĕ (малтан епĕ пĕлмен ăна, епĕ ахаҫ ҫын тесе, ҫамки ҫине ҫырса хуманҫке, „ҫак ҫын претҫетатгĕл тăванĕ“ тесе). Претҫетаттĕлтен налук йĕркипе справккă ыйтать. Иурать. Мана хайхи справккă ҫырма хушрĕҫ. Еп капла ҫырап, претҫетаттĕл урăхла ҫыртарасшăн. Епĕ унҫен ҫĕнĕ инструкси вуланăҫҫĕ. Ҫĕнĕлле ҫыратăп. Претҫетаттĕл хайĕнне. Еп хайхи инструкси ҫинҫен систертĕм.

— Ес ăна вуламан пуҫ, унта ҫапла каланă,—терĕм те илсе килсе кăтăртрăм.

Претҫетатгĕл нимĕн те ҫĕнмерĕ, шуpă куҫне ҫеҫ ҫавăрса илҫĕ. Инструкси кăтартнă пек ҫырса патăм. Хурăнташĕ лĕмсĕртеткелесе тухса кайрĕ. Хайхи пĕр кун ĕҫлетĕп, ик кун ĕҫлетĕп— претҫетаттĕл ҫĕнмест. Виҫҫĕмĕш кун еп ҫырнă хута алă пусмасть, ҫырма пĕлместĕн, тет. Пĕр ҫула йахăн ҫырнă, ун ҫух пĕлнĕ, хаҫ пĕлместĕп пулать. Кашни кун хирĕҫмелли тупать. «Ку апла мар, ку капла мар». Тĕнкене илҫĕ. Вĕренме хăй килте, хăй тĕллĕн ҫеҫ вĕренкеленĕ. Аллине те кукăр-мăкăр ҫеҫ пускалать.

— Еп ăна ҫаркуҫарсем, инструксисем кăтартатăп. Вăл аллине ҫеҫ сулать. Ан вĕрент мана, пĕлетĕп. Вĕреннĕ ҫынна вĕрентмеҫҫĕ ăна, тет.

Пĕрре ирхине ĕҫе пытăм та, алла руҫкă тытсаттăм, претҫетаттĕл калать:

— Ну, Кусатранăв, сан вырăнна епĕ урăххи тупрăм, ес ĕҫлеме пĕлместĕн, марш кунтан, тет.

— Халҫҫен ĕҫлерĕмҫке, ма аплаха вăл?—тетĕп хăйулланса.

— Ҫапла пуҫ те, хаҫ ес кирлĕ

# Вăхăт виçи.

Шупашкарта ерех савăтĕнҫе ĕçлекенсем саҫатгирен ӳсĕр тав ăнаççĕ.

(Капкор).



— Урамра ӳсĕр çынсем курăнма пуçларĕç.
— 4 сехет çитнĕ еппин. Сехет пирĕн кайа йулнă.

мар. Ес ман çинҫен шалăпă панă, мана выкăвăр паҫĕç, тет. Лаçлаттарса сургăм та килелле тухса утрăм.

— Шалăпă панăҫҫĕ-им вара есĕ— ыйтрăм унтан.

— Мĕнле шалăпă,—сасăртăк тĕлĕннипе ҫарăнҫĕ Кусатранăв.—Асăмра та пулман.

Выкăвăр ăна ҫăнахах панă, анҫах шалăпăна ҫлен çырса панă.

— Ма сана сирпĕтрĕç тата?

— Куратни мĕнле вăл. Леш, ҫленĕ ăна йăпăлтатаť, куç умĕнҫе мухтаť, вăрттăн хыçаť.

Епĕ тӳррипе калама йуратап, куçран калатăп. Претçетаттĕл вăл панă тесе шухăшламан та, тӳрех ман çине шухăшланă. Хăни пур ҫух инструкси çинҫен систернине те, епĕ йури ăна намăслантарасшăн çеç каланă тесе шухăшлаť. Е-х-х, сыхланма кирлĕ çав, хăшне пĕлсен те каламалла мар иккен, терĕ Кусатранăв аллине сулса. Тăрăшсан пуçлăх санне темĕнле айăп та тупма пултараť. Вăт тӳррипе кала. Истори йулташ, тĕлĕнмелле истори,—терĕ вăл апгăраса.

— Тупнă истори, ун пекки сахаľ им? Ҫас-ҫасах пулкалаť ун пек «истори». СĔЛТĔРМЕН.

# Шупашкар кăмăлне.

Мĕнле пурăнан, савнă Шупашкар?.. Аҫу-пăҫусем мĕнле пурăнаҫҫĕ тата, Мускава тухса тарса пĕтмерĕҫи?.. Пурăнкалатăп тетĕни майĕпе... Иураҭ апла пулсан. Атту епĕ кăҫал сан пата килнĕ ҫух, сана хăвăн аҫусем тăлăха тăратса хăварнă пулĕ тесе хăрарăм. Мĕн тетĕн есĕ, тăлăха тăрса йуласси пулĕ вăл—пайан пĕр пуҫлăх тухса шăвăнĕ, ыран пĕрин упăшки тухса вĕҫĕ, тепĕр кун теприн арăмĕ йăкăртатĕ—пĕтет те вĕт санăн 8 пинлĕ хаклă килйышу...

Ҫимха, Шупашкар, мĕншĕн есĕ ман ҫине палламан ҫын ҫине пăхнă пек пăхатăн? Палаймарăни мĕн ҫăнах та?.. Ара есĕ иртнĕ кĕркунне хăвах мана прахут ҫине ăсатса хăвартăнҫке. Аййай, пăшăрхантаратăн есĕ мана, Шупашкар, капла хăтланса... Тепре каласан, мĕн пăшăрханмалли пурха унта? Мĕн епĕ... «Хресҫен Ҫурҫĕ» мар вĕт. Ес хăвăн аллу ҫинҫе ӳснĕ пĕҫĕк ҫынсене ăҫтан астăвăн вара. Ҫук, пăшăрханса ĕҫ тухмаҫтех. Ҫавăнпа епĕ пăшăрханас вырăнне те кулатăп. Кулă лайăх йапала вăл... айта манпа пĕрле есĕ те кул, Шупашкар!... Мĕншĕн кулмастăнха тата?..

Ай Коркоп столовăйĕнҫе ҫĕрене пусармаллăх апат ҫисе тухайманшăн кăмăлсăр пултăн?.. Ан куҫҫан, Шупашкар!.. Ытах пĕре ҫинипе тăранмарăн пулсан айта тепĕр хут кĕрсе ларар! Манăн халĕ пур пĕрех хваттер ҫук. Коркоп столовăйĕнҫе кун иртерме питĕ лайăхҫке вĕт унта. Иашкине ҫисе хырăм выҫнă ҫĕре «иккĕмĕшне» лайăх пырса пама ĕлкĕреҫҫĕ те, иккĕмĕшне ҫисе йанă хыҫҫăн каллех йашка ҫийес килекен пулаҭ. Анҫах темме Коркоп хăйĕн столовăйне краваҭсем лартман. Вăт краваҭсем лартса панă пулсан—кана-кана ҫимелле пулаҫҫĕ...

Тата сана Коркоп лапккисен умĕнҫе „хӳресем" шăтни килшĕмест пулмалла. Ниҫаво... „Хӳресем" вĕсем самокриттĕккă ĕҫне питĕ лайăх туса пыраҫҫĕ. Хăйсем ҫинҫен ҫынсем мĕн каланине пĕлесшĕн пуҫлăхсене есĕ йалтах ҫав „хӳресене" кайса тăма хуш.

Тен есĕ, Шупашкар, хăвăн уҫрештенисенҫе ҫаваш ҫĕлхине алăк патне ылтарса хунăшăн кĕвĕҫетĕн?.. Уншăн та кĕвĕҫсе кăмăлна ан пĕтер. Уҫрештенисен виҫ ҫалăш тăршшĕ вывĕскисене йăлтах ҫавашла ҫырнă вĕт— унпа ҫитмести мĕн сана. „Хресҫен Ҫурҫĕ" ҫине вырăсла ҫех „Дом крестьянина" тесе ҫырнăшăнах ҫиленме кирлĕ мар пек туйăнаҭ. Ҫаваш ҫĕлхи кашни кунах сарăлса пыраҭ вĕт. Акă хăвăн паллă пĕр поету, нумай пулмаҫҭ пĕр консертра хăйĕн сăввине ҫуррине лайăх ҫавашла каласа кăтартрĕ. Тепĕр консертра ҫуррине анҫах ҫавашла калас ҫук ĕнтĕ вăл.

Тата есĕ, хаклă Шупашкар, хăвăн аҫусене ваҫҫи ҫаваш театтăрĕ туса парайманшăн куҫанмастăн пулĕҫке.. Пăрах, терĕм сана паҫăрах, упашкал вырăнсăр шухăшсемпе вуник ҫиркӳллĕ пуҫна ҫĕмĕрме. Тем те калĕҫ сана йалти ҫын ăсне пăрахайман ҫавашсем. Вĕсем сана икĕ труппă (пĕри вырăсла, тепри ҫавашла) усраттарасшăн теҫҫĕха вĕт? Калаҫҫăриҫ, ҫĕлхисем хуҫалса кайиҫҫен. Иалтан килнĕ ҫывна, хăвах пĕлетĕн, театтăр мĕн тума кирлĕ вăл. Ытах савăнас килсен, вĕсем йалсенҫи туйсене те кайса савăнĕҫ. Хулари вырăссем ваҫҫи санăн вырăс труппи пур. Халĕ, сывă пулгăр ҫавашсен вырăс труппи, тесе савăнмалла ҫеҫ. Вырăс ҫĕлхи йăлăхтарсан, мушĕт вĕсем ҫавашла та выҫаса кăтартĕҫха. Артиссем ҫавашла калаҫма вĕренесси—сурҫăк сурни анҫах вĕт.

Тата мĕн сан кăмăла хуҫма пултараҭши?.. Мушĕт пошарнĕксем... Вĕсем пулсан, хуйхăрса ан тăрах, Шупашкар! Шуглаха хăвах—пушара ăна никам та йуратмаҫҭ. Ҫынсем пекех ăна пошарнĕксем те йуратмаҫҫĕ. Ҫавăнпа вĕсем пушар патне тухса та ҫармаласшăн мар. Пушар сӳннĕ ҫĕре шăп ҫитеҫҫĕ те, ҫавăнтах кайалла кайса тутлă ыйăха ислетме пуҫлаҫҫĕ. Анҫах ӳлĕм ыглашши сăмах-йумах ан пултăр тесен, сан пошарнĕксене „песпошарнĕксем" йатлă хурас пулаҭ. Песпошнĕксем тенĕ пек пултăр...

Хăвах шутлаха ĕнтĕ, Шупашкар, санăн мĕншĕн куҫҫанас?.. Ĕҫсем йапйака пыраҫҫĕ, ҫынсем шĕкĕр пурнаҫҫĕ... мĕн кирлĕ тата сана?.. Пăрах хуйхăрма, Шупашкар, тавай кул манпа пĕрле, каҫса кайсах кул... Сывă ҫыншăн кулă вăл—лайăх йапала.

РОНИ.

## Пултаратпăр пулмалла!

(Касађђок кĕввипе).



Совет влаçĕ ђунтанах
Тĕттĕмлĕхпе çапăçат̆,
Утăрка, тет, маллла,—
Çутта тухма йăхăрат̆.
Ех! Пирĕн мушиксем
Пуçĕнђĕçĕ çутăлма.
Кашнă килтех çуттисем:
Ђетвĕртпе те лакăмпа!
Ђухăнсене пулăшмашкăн
Пулăшкомсем кирлĕ çав!
Пурнăç çулне йусамашкăн
Ĕçлес пулат̆ вирлĕрех.
Ех! Пирĕн пулăшкомсем
Пултараççĕ пулмалла!
Ђухăн вађђи пулăшува
Атрĕслеççĕ пуйана!
Усламăçа пуйтармашкăн
Текех епĕр тăнсăр мар!
Копператтив уçăпăр та
Иўне ўкĕ шалавар.
Копператтив уçрăмăр та
Хĕпĕртесе карăмăр!
Шăлапирле çытаксене
Висĕ тенкех илетпĕр!
Нумай пусă тумаллишĕн
Акрономсем шавлаççĕ,
Çĕрйĕркелў ĕçсене
Ђасрах тума ыйтаççĕ.
Ех! нумай пусува
Тинех туса хутăмăр!
Çĕрйĕркелў пуласса..
Тĕлĕкре çеç куртăмăр!
Пођтăсем те аранах
Хăвăрт ђупма пуçĕнђĕç,
Хаçатсем те йалалла
Пит вăхăтра сарăлђĕç.
Ех! Пођтă лашисем
Çил-тăвăл пек вĕçеççĕ!

## Вăрăмтуна.

Мĕнши ку, мĕскер
Хытă ђĕпĕтет?
Пĕрне пĕгерен,
Тепри ђĕрĕлет.
Пăхха—
Хĕп хĕрлĕ,
Ури унăн тăсăк:
Вăл та вĕт тĕрлĕ,
Пĕри пĕђĕккĕ,
Тепри пысăк.
Çын йунĕ тесен
Савăнсах кайат̆,
Висҫкун çимесен
Ђĕри ыратат̆.
Çапах ĕмри ун
Ĕмри пит кĕске,
Ĕмĕр хĕрлĕ йун
Пўрмен йĕксĕке.

————

Вăрăм гуна пекех пўрократ
Етем йунне ĕçме йуратат̆.
Иуратат̆ çав йуна пўрократ,
Анђах кайран ђунĕ ыратат̆.
Ĕнтĕ ыратмасан ыратмалла,
Ут хађ конвойпала малалла.

Петђа.

Виç кун кайас çырусем
Уйăхранах çитеççĕ!
Пирĕн йалти хĕр-упраç
Ăсĕ кашнин виç хăлаç,
Тăрăшаççĕ вĕренме
Текех пурăнмĕç тĕттĕмре!
Ех! Халĕ вĕренсе
Çутта тухса карĕçĕ—
Вунултăра пулин те
Папак тума пĕлђĕçĕ!
Хăш-пĕр тухтăр пеккисем те
Пит ĕçлеççĕ гăрăшса,
Ђир-ђĕрсем те ĕлĕкхин пек
Тек çўреймĕç ахăрса.
Ех! Хăш-пĕр тухтăрсем
Пултараççĕ пулмалла!
Пыр ыратсан паттăрсем,
Емеллеççĕ хăлхана!

АТТАЙ М.

**Ђăвашкисăн тĕрлĕрен сăрсем пĕтсе çитнĕ пирки, „Капкăн“ вăхăтлăха пĕр сăрпах сăрланса тухат̆.**

# ИНÇЕТРИ ЙАЛ.

Утик-кассинђи (Шупашкар рай.) хресђенсен 35 çул ытла çĕр виçи пулман. Иалĕпе 1 пионер, пĕр комсомолĕс, 1 парттитсă (йалта пурнаканни) çук.



**— Сирĕн йал Шупашкартан инçеи?**
**— Çывăх мар çав! Октăпĕр револђутси пулни вукпĕрмĕш çул та ĕнтĕ, револђутси халиђен те пирĕн йала пырса çитеймерĕ.**

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 700. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.